Çакнашкал пысăк мулăхсемпе усă курасси ку тараннчеех лайăх тата çирёп йёрке тăрăх пулса пыман. Çирёп йёрке пулман пирки хăшпёр хёрарăмсем йăвăр çын пулнине витёнсе государствă укçине тивёçсёр илнё. Акă пёр тёслёх, 1937 çулти декабрёри 25-мёшёнче пирён савăта О. Т. Дворникăна ёçлеме кёчё.

1938 çулти январрён 25-мёшёчченех ёçленё хыççăн вăл 4 уйăхлăха отпуска кайрё. Кайран вара ёçе те тавăрманăмарё. Тўрех калас пулат. Дворникăна государствă укçине тивёçсёр илнё. Ун пеккисем халё те сахал мар-ха.

Епё икё ача амăшё. Çак кунсенчех манăн йăвăр çын пулнине тата отпуска каймала. Чăннине каласан, отпуска каймăччен епё тепёр уйăх лайăхланăс ёçлеме пултаратăп. Савнашкалах ача çуратнă хыççăн та чылай малтан ёçлеме тытăнма пулат. Çавăнпа епё йăвăр çын пулнине отпуск парас срука чылай чакарма сёнетёп.

Йăвăр çын пулнине отпуск парас срука чакарни ача амăшёсемшён хăрушă мар. Мёнён тесен пирён çёршывра ачасене лайăх пăхса ўстерме мён киранине пурне те туса панă. Çав вăхăтрах отпуск срукне чакарни государствăна пысăк усă парат.

Степанăва.

Çёмёрлери „Болşевик" савăтри ача сачён пуçлăхё.

Савăт çурчёсенче прогульшчиксем валăçи вырăн çук

Пирён савăт коллективё производствăна планне тултарассишён пысăк тимлёхпе кёрешет. Савăтра ёç çине социализмăна пăхма вёренесе çитнё çынсен — стахановёçемпе ударниксен хисенё куллен ўссе пырат. Анчах ёç дисциплинине пăсакансем—прогульшиксемпе каласлесем пётнё теме çук-ха. Ака, Булычова илер. Вăл час-часах ёçе ўçёр тухат. Çапах та руководительсем, «ăна никампа уйăтрама май çук» тесе, ку тараннчеех ачапласа усранă. Пулашки вăхăтра çеç ёçрен кăларса ăнă.

Акă, тепёр тёслёх. Насейкин пёрмăх прогул туса пынă. Пулашкинчен ăна ёç дисциплинине пăснăшăн тесе ёçрен кăларса ăнăччё. Унтан татах ёçе илнё. Кун хыççăн та вăл прогулсем тума пăрахман. Вара ăна татах ёçрен кăларнă. Апла пулни те Насейкин халё те савăт çуртёнчех пурăнат. Çав вăхăтрах производствăна тўррём ёçлекенсенчен хăшпёрисем хватерсёр.

Пичугина та çавăн пекрёх пулнă. Ăна прогул тунăшăн ёçрен кăларнăччё. Савăт директорё производствăна организацине килёшмесёрех кайăла илнё.

Ёç дисциплининне çирёплетес тёлёшпе йыттăшăна судсем пысăк выранăта тăрăççё. Вёсен производствă дезорганизатёрсене çиленче тултăсах калмала, прогульшиксемпе çимўдантсене хирёç тытăкăн кёрешсе пымала. Анчах пирён савăтра йыттăшăна судсем питех те нахăр ёçлеççё. Профсойуз организацийн йыттăшăна судăн ёçне хăйăхлатма пулăшмала.

Пирён шутпа, прогул тунăшăн ёçрен кăларнисене пёр суламалăк иртсен çеç кайăла илмеле тăвас пулат. Ёçе кайăла илнисене социалăл страховани йенёне пулăшу панă. Чунне малтан ёçлеме тухнă çынсене пётнех те нахăр ёçлеççё. Профсойуз организацийн йыттăшăна судăн ёçне хăйăхлатма пулăшмала.

Пирён шутпа, прогул тунăшăн ёçрен кăларнисене пёр суламалăк иртсен çеç кайăла илмеле тăвас пулат. Ёçе кайăла илнисене социалăл страховани йенёне пулăшу панă. Чунне малтан ёçлеме тухнă çынсене пётнех те нахăр ёçлеççё. Профсойуз организацийн йыттăшăна судăн ёçне хăйăхлатма пулăшмала.

Пирён шутпа, прогул тунăшăн ёçрен кăларнисене пёр суламалăк иртсен çеç кайăла илмеле тăвас пулат. Ёçе кайăла илнисене социалăл страховани йенёне пулăшу панă. Чунне малтан ёçлеме тухнă çынсене пётнех те нахăр ёçлеççё. Профсойуз организацийн йыттăшăна судăн ёçне хăйăхлатма пулăшмала.

Пособи панă хухне мёнчухлё ёçленине шута илмеле

Кăçал çуллахи вăхăтра Сăр шывё хёрринче пулнă массовкăра пирён „Болşевик" савăтри рабочи Семагин ўсёрпе вăрçса çуравланнă. Кун хыççăн вăл пёр уйăх хушши пуçнинăра выртнă. Унтан тухсан чылай вăхăт хушши бюллетеньпе çўренё. Савăншăн ăна социалăл страховани укçине тўленё. Кунашкал туни прогульшиксемпе çимўдантсемшён çеç усăлă, вăл ёç дисциплининне пăсасси патне илеç пырат.

Çакăн пек фактсенё тишкерес тухсан социалăл страховани шучёне пулăшу парас йёркесене халех уйăтрама кирли ўççăнах кўрăнат. Ман шутпа ўсёрпе йе тата хулăнланăнса çуранлăннă çынсене пособи тўлемелле мар. Пособи тўлевё чухне пособи илекен çын мёнчухлё тата производствăра мёнле ёçлеменне шута илмеле тăвас пулат. Çапла туни дисциплинăна çирёплетме, прогульшиксемпе летунсене хирёç кёрешме май парат.

Производствă дезорганизатёрсене—прогульшиксене, рвачсене, летунсене хирёç вăйлă кёрешў пуçармăла. Анчах вёсене хирёç пёр администрацинлё майсемпех кёрешни çителёксёр. Дисциплинăна çирёпнён тытса пымăла тăвас тесен политикăл-массăл ёçе вăйлатасе рабочисене социализмăна воспитани памала. Стахановăна йухăма вăйлатасăх пырса пур рабочисене те тўррём, стахановăна меслетсемпе ёçлеме вёрентмелле.

Шарин.

Механически мăçтерскойёнчи стахановёнё.

Государствă укçине кахалсемпе рвачсенчен сыхлар

Рабочисемпе служăшчисем, инженерла-техникла работниксем ёçлеп саккунёсене тата социалăл страховани правилисене уйăтăрма сёнўсем параççё. Ку питех те кирлё мйту. Мёнён тесен, ёçлеп саккунёсем, уйăрăмах социалăл страховани правилисем чылай кивелнё. Хăшпёр тёлёшпе вёсем социализмăна ёç дисциплининне пăсакансенё—прогульшиксене, кахалсене, рвачсене усă параççё. Епёр, социалăл страховани ёçне туса пыракансем, вăл саккунсем кивелнине хамăрăн кулленех пурнăçра туйатпăр.

Пирён республикăре государствă сутуилўвёнчи работниксен сойўзё социалăл страховани йенёне кăçалхи 9 уйăх хушшинче йăвăр çын пулнисене отпускăн 33,500 тенкё тата вăхăтлăха ёçлёмен пирки 66 пин тенкё пособи тўленё. Пособи илекенсен хисенёнче пурнăçлă ытларах тўррём ёçлекен рабочисемпе работницăсем тата служăшчисем. Анчах, калас пулат, государствăн социалăл страховани укçине тивёçсёр, уталаса илекенсем те пур.

Ака, Канашри «Бакалея» магазинёнче ёçлекен продавщица Меншчикова ёçе кёрсен икё уйăх ёçлесенех йăвăр çын пулнине тăвата уйăхлăха отпуска кайнă. Шупашкартри продуктăсем сутакан 1-мёш номёрлё магазинта ёçленё Семидетăкă вирё уйăх ёçленё хыççăнах тăвата уйăха отпуска кайнă. Отпускăн укçа илнё хыççăн ёçе те тавăрманăн. Кун пек фактсем чылай çёрте пулнă. Çапла Меншчикăвăна Семидетăкă пек хёрарăмсем ёçе государствă укçине илессишён çеç кёнё.

Социалăл страховани йенёне пособи парас ёçри çавнашкал пысăк çитменлёçсем ёçлеп саккунёсем тата социалăл страховани правилисем кивелнинчен киреççё. Хальхи вăхăтри саккунсем тата правилăсем тăвăр рабочи ёç служăшчи ёçе кёнё хыççăнах пособи илме пултарат. Пирён шутпа ку йёркене уйăтмарăмла. Куншăн пуçне йăвăр çын пулнине паракан срукне чылай чакарни кирлё. Мёнён тесен, пирён çёршывра хёрарăмсене валăçи лайăх пурăнма пур условиксем те туса панă.

Тата çакна калăмала: социалăл страховани йенёне пособи памали халхи вăхăтри саккунсемпе правилăсем ёç дисциплининне çирёплетес задачăна тачăн сыхăнса тăмаççё. Пособи памали положенин 29-мё статйи тăрăх предприйатире çуталăкран сахал ёçленё работниксемпе служăшчисем бюллетеньне çўренёшён ёççукçи ²/₃ пайне илме пултарать. Мёнле пурнăçа кёрса пырат-ха вăл йёркё? «Главкожобутьпром» кантурён Чăваш республикинчи банне апрел уйăхёнче Кожевникăн ёçлеме кёнё. Вăл 4 уйăх ёçленё хыççăн августăн 1-мёшёнче, Атăл леш енче ўсёрпе урине сураналтăк. Çакăн хыççăн Кожевникăн 115 кун çукçин бюллетеньне сўресе ёç уьçин ²/₃ пайё шутёне пособи илнё. Кожевникăн бюллетеньне сўрене вăхăтра вечёрсене ташлана, анчах ёçе тухаспи патне çитсен унăн ури çаплах «ыратнă». Çапла 120 кун ёçленё хыççăн 415 куншăн пособи илсен, Кожевникăн сакăр уйăхшăн отпуск нама ыйтнă.

Государствă суту-илўр организацийенче рабочисемпе нумай улшăнçё. Иналах, вăл суту-илў ёçёнче пит палăрат. Суту-илў работникёсен пысăк масси тўрё тата тарăшса ёçлет. Çав вăхăтрах рвачсем, кахалсем ёçлемесёрех государствă укçине ытларах илессишён пикенеççё. Улатăрти суту-илў организацийенче 1937 ç. 350 çынна ёçрен кăларнă. Вёсен хисепёнче растратчиксем те нумай-çке. Шупашкарти тата Канашри суту-илў организацийенче те кадресем тёлёшпе ёç начар тăрат.

Работниксем улшăнсах тăнипех профсойуз организацисем те айăплă. Мёнён тесен, профсойуз организацийсем ку тараннчеех ёç дисциплининне çирёплетес тёлёшпе кирлё пек ёçлемен. Работниксем хушшинче политикăлмассăлă ёçе те тивёçлипе туса пымаççё. Çакăн пекех организаци руководительсем те дисциплинăна çине çийелетен пăхаççё. Нумай организацисенче, учреждениесенче рабочисемпе служăшчисем ёçе çўренине шута илсе пымаççё. Çавна пула служăшчисем хушшинче дисциплинăна çемçелё.

Акă пёр факт: декабрёрён 23-мёшёнче «Чебторг» аппаратёнче ёçлекен 35 работникрен 9 сехет тёлне 23-шё çеç ёçе пынă. Анчах ёçе вăхăтра тухманисем çинчен викам та пёр сăмах та шарламаçё.

Ёçлеп саккунёсен кодексён 46-мёш статйи тăрăх предприйатире йе учреждение ёçлекен работник хăй ёçрен тухса каймасси çинчен çичё кун малтан администрацине пётермелле. Çичё кун иртсен вара вăл пёр сăмахсăрах тухса кайма пултарать. Ку статйа кивелнё. Кайакан çын вырăнне çичё кун хушшинчех работник тупма йăвăр. Çавăнпа ку статйана уйăтмарăмла. Работник хăй ёçрен тухса каймасси çинчен сахалтан та пёр уйăх малтан пёлтермелле тăвас пулат. Çавăн пекех отпусксем патне кёркене те уйăтмарăмла. Хальхи пек отпусксем пилёк уйăх çурă ёçленё хыççăн мар, 10—11 уйăх ёçленё хыççăн памала туçан аван пулат.

Ёçлеп саккунёсене тата социалăл страховани йенёне пособи памали правилăсене лайăх ёçлекенсене пулăшу пысăкрах памала тăвас май уйăтăрăни ёç вăй йухăмне пётерме, рвачсемпе кахалсене хирёç кёрешме условиксем туса парат.

ДАНИЛАВ.

Государствăл суту-илўвёнчи работниксен сойўзён Чăваш АССР Обкомён инструктăрё.

Догăвăрсем тунă

Партине правительствă колхозсене, колхозниксене, ёдиноличниксене хăйсенчен ытларăшши тыррă кооперацин урлă государствăна сутмă ирёк панине пирён Чăваш республикинчи ёççынсем пысăк кăмăлпа кётсе илчёç. Халё, колхозсенчи асăл пухăвсенче кăçалхи йăлăхусăлăх сулён итогёсем çинчен сўтсе-явнă хыççăн, колхозсемпе колхозниксем хăйсенчен ытларăшши тыррăна государствăна сутаççё. Декабрёрён 20-мёшне республикăри йăлăпосем колхозсенчен 69.179 центнер тырă сутăн илме догăвăрсем тунă.

Канаш, Шăмăршă, ишлей, Турăн районёсенче çак ёçе тивёçлипе хаклămаççё. Ку районсенче ытларашши тыррă государствăна сутăсси çинчен массăлă-йилантарулă ёçсене кирлё пек туса пымаççё. Тата хăшпёр колхозсем государствăна тырă сутмă йăлăпосемпе догăвăрсем тунă пулсан та йăлăнасенче тыррă йышăнма пуçăнман. Канаш районёнче (райсойуз председателё Захăрăн йăуташ) декабрёрён 20-мёшне те колхозсенчен 277 центнер çеç тырă сутăн илме догăвăрсем тунă.

Баршчинăлă система—отработкăсенче сыхлансе йăлнă. Отработкăсен капиталисăмăлă системăна—ёç вăйне „иркёрен" тара тытăссипе—сыхланса пынă.

Хресченсене феодалла експлуатацирен иркёне кăларнине кăтартакан тёп прогрессивлă фактсенчен пёри вăл—çёрçёнче тара тытса ёçлеттересси ўссе пынипе пулнă. XIX-мёш ёмёр вёçёнче помещикла производствăра тара тытса ёçлеттересси тата машинăсемпе усă курасси ўсни—помещик хуçалăхё капитализăм ённенле евољуцилесе пынине пуринчен те уççăн кăтартса паракан факт пулнă.

Анчах та çакна народниксем курмăч, курасшăн та пулмаç. Вёсем отработкăсен системине идеализацинленё, вёсене помещикицке хресчен хушшинче хире-хирёлёхе пётермели услови вырăнне хунă. Вёсем хресченсем тара кёрёшсе айăкклă ёçлеме кăйассине те хирёç пулнă. Народниксем, хресченсен интересёсене хўтленё пек пулса, хресченсене феодалла експлуатацилессине майлă тăнă, реакцилё помещиксем интересёсене хўтленё. Ленин народниксене тăрă шыв çине кăларнă, вёсен пичёсем çинчен „халăх тусёсем пулнине" кăтартакан маскăна сўсе пăрахнă, вёсен чăн-чăн реакцилё сăн-сăпатне кăтартса панă.

* * *

В. И. Ленин хăйён „Развитие капитализма в России" йăтлă кёнекинче реформă хыççăнхи Российăри промышленнăç формисене—„обрабатывайушчи промышленăçри общественнăлă-экономикăлă отношенисен стройне тата çак стройăн евољуци характёрне" анализ тăвать. (Çавăнтах, стр 254). Çакăн çинчен 5—7-мёш пайсенче сырнă.

Крепостной правăна пăрахăçа кăларни Российăра промысласене ытларах анлăн сарăлма майсем туса панă. Таварлă вак производствă ата-

ланăн — капитализăмăн Российăн промышленнăçёнчи аталанăвён пирваллăх тапхăрё пулнă. Реформă хыççăнхи Российăн условийёсенче вак промысла, вака товарпроизводительсене пайлантарса тата вёсем хушшинчен капитализăм елементсем кăларса пыни урлă капитализăм ённенле аталанниччен пуçлă ёçе урăхла майлă аталанма пултарăман.

Народниксем, вака çёрçёне идеализацинленё пекех, хресченсен промыслисене те идеализацинленё. Вёсем çак промысласене „хăйне тёлён халăх производстви" вырăнне хунă. капитализăмшăн „йуг йăпала" тесе шутлана. Народниксем çапла шутланă пётём суйăлăхсем Ленин тăрă шыв çине кăларнă, вăл: «экономиссем-Маниловсем» капитализма курман çёрте, тахçанах капитализăм аталанса пынине кăтартнă.

Реформă хыççăнхи Российăра капитализма вака предприйатисем капитализăмăн ытларах вслă формисемпе: мануфактурăна тата хапрăкпа сыхăнса кайнă. Вака промысласемпе пёрлех, тара кёрёшнё вуншăр, çёршер рабочисене пёрлештерсе тăракан мануфактурăсем пулнă. Çак мăçтерскойсенче алвёçсен ёçленё. Ёçе—ёçлев валеçёнче тăнă тăрăх организацинленё. Промысласенче капитализăмăлă мануфактурă пуçлуса тăракан вырăнта пулнă.

Вака производствăсем нумай пулни, експлуатацин чи тискер формисене—капитализссем килте ёçлеттерекен формăсене вăйланса пыма никёс пулса тăнă. Ленин шутласа пăхнă тăрăх, 50—60 уйесра кăна капитализссем ёçёсене килте туса тăракансем 200 пин çын ытла пулнă.

Мануфактурăран машинăлă шутра индустри çине куçни—капитализăм общественни пётём ăçтагонисăмне вăйлатас йенёне уйрăмах пысăк вырăнта тăнă.

„Мануфактурăран фабрикăна куçни тулли технически переворот пулнине пёлтерет, вăл мăçтăрăн ёмёртен туйăнса пынă алёç искусствине сирпёнтерсе йăрат, çак технически переворот хыççăн вара пурнăçех производствăри общественнăй отношенисене тўртёи çёмёрçе тăкасси, производствăра ёçлекен çынсен тёрлё групписем хушшинче татăкланăх раскол пуласси, йăлсенчех пётёмпех уйăрăлса кайасси, капитализăмăн пётём ирёр йенёсем çивёчленесе, сарăлса пырасси, çакăнпа пёрлех вара капитализăм ёçлеве массăлăн пёрлешўлёнтересси пулса пырат. Çапла ёнтё, маши-ăлă шултра индустри капитализăмăн йăлашки сăмахё. унăн начар тата „лайăх моменчёсен" йăлашки сăмахё пулат". (Çавăнтах, стр. 353).

Вăл тапхăрти вырăс статистикин сведёнийёсем мануфактурăран хапрăк промышленнăçне куçине характеристикă пама йăрăлăх пулман, вёсем тулли кăтартса пама ауглтарассинчен инçетре ауна. Кунсăр пуçне тата статистикă вакă промышленнăçа та, шултра промышленнăçа та „хапрăк-савăт промышленнăçён" пёр графине кёртнё. Статистикăн çак ситменлёкёсемпе народниксем Российăра капитализăм аталанса пынине кăтартакан процеса шăлса лартас шутпа ун çине курнă.

Ленин статистикă кăтартса панисем çине критикăй ёнченех тишкерсе пăхнă. Вăл хапрăксен палăлăхне кăтартса панă. „Çак тапхăрăн тёп тата пуринчен те ытларах пысăк палăлăх вăл,—тесе çырнă Ленин,—производствăра машинăсен системине усă куринче пуçлат". (Çавăнтах, стр. 353). Çак палăлăхпа усă курса, Ленин шутра хапрăк-савăт промышленнăçё хăвăртăн ўссе пынине, унăн реформă хыççăнхи Российăри производствăн тёрлё отрăслисенчи тўпе шайне кăтартса панă.

Капитализăм тарăнах та тарăнах Российă пурнăçне кёрсе пынă, анчах, çакăнпа пёрлех, Российă кайа йăлнă, пăхăнса тăракан, капитализăм аталанăвё тёлёшёнчен Хёвеланăç Йевропăри çёршывсенчен йăлса пыракан çёршыв пулнă.

„Российăри капитализăмчченни самаянна капитализăмăл самаяпа танлаштарас пулсан (ыйтăва тёрёс татса парас тесен, шăпах та çакăн пек танлаштарни кирлё ёнтё), вара общественлă хуçалăх аталанăвё капитализăм чухне питех те хăвăртăн пырат тесе ыйтăнма пулат. Хальхи аталанăвăн хăвăртлăхне ку чухнехи техникăпа куҫурăн вицне çитсен вăл аталаву пётёмёшне мёнле пулмалине танлаштарсан, вара Российăри капитализăмăн хальхи аталанăвне чăннипех питех те йерипен пырат тесе йышăнмала пулат. Вăл çакăн пек йерипен пулмасăр пулма та пултараймасăт, мёншён тесен, пёр капитализăмлă çёршывсем та капитализăмпа çурăçуай пулма пултарăман аваллăх учеждениссем çакăн пек нумайăшăн ăçмăкă, вёсем производителёсем капитализăмăн та тата капитализăм çителёклён аталанăйманнинчен те асап курассё". (Çавăнтах, стр. 469).

Хапрăк-савăт промышленнăçё аталанасси рабочисене хуласене илсе пырассине çыхăнса тăнă. Çакă вăл „йалан ёçлекен хапрăк рабочисен класё пуçланас" процесра, çёрçёнчен татăклăнах уйăрăлнă вырăс пролетариачё пуçланас, çавăн пекех тата рабочисен массине организацилес, вёсен революцилё ăстăнне ўстерес процесра уйăрăмах пысăк вырăнта тăнă. Çак тапхăрта Российăра стачкăлă кёрешў ўсме пуçлат. Ленин хăйён «О стачках» йăтлă статйинче,—ăна вăл 1899 çулта çырнă,—çапла калат: «Рабочисен стачкисем йăлашки çулсенче Российăра питех те час-часах пулма пуçларёç». Малала, çак стачкăсем мёншён пулнине ответлесе, Ленин çырнă: «... Ăçта шултра хапрăксем пулса тăрса сарăлаççё, çавăнта стачкăсем пулса тăрса сарăлаççё». (Т. I. стр. 571).

Рабочи класăн пурнăçё питех те йăвăр пулнă: вырăс промышленнăçёнче ёçкунё питех те вăрăм, ёç укçи ытла та сахал пулнă. Çавăн пекех ёçсем хватер тёлёшёнчен те йăнăс пулнă. Тата та ытларах вакă, çавăнпа производствăсенче ёçлекен, çёрçёнчен татăклăнах уйăрăлман рабочисен пурнăçё начар пулнă.

Народниксем промыслапа çёрçёне „çирёппён" пёрлешсе тăнине курса савăннă, анчах çав вăхăтрах вёсем рабочисен шăпах та çак кадресем пурнăнех те тискеррёнтерех експлуатацилённине туя илмесёр, хăйрăк промышленнăçё ўсни вăл—çакăнпа пёрлех тата, рабочи класс капитализăмăн тискер експлуатацинленё хăтăлассишён кёрешесси вăйлăммала пулассинне пёлтернине йышăнмасăр тăнă. Ленин народниксен çак реакцилё шухăшёсене те çёмёрçе такăнă.

* * *

Реформă хыççăнхи Российăн экономики тавар савăрăнăшё, капитал пухăнасси, промышленнăç капитализăмё аталанасси питех те пысăкăн ўснине кăтартнă. Халăх çёр вёçёнчен уйăрăлни, индустрине рабочисен йышё ўсни—капитализăм аталанăвён уйăрăлми пăйё пулнă. Реформă хыççăнхи Российăра çак ўсём—хуласем, хула сывлăхёнчи вырăнсем, хапрăк-савăт тата сутуилў промышленнăç йăлёсемпе местечкисем ўснинче, çавăн пекех тата çёрçёнчен айăккала кайса ёçлесси ўснинче курăнна. Тара тытăй вăйпа усă курасси пёрмайăх ўссе пыни Российăра капитализăм аталанса пынине кăтартакан пысăк паллăсенчен пёри пулнă. Реформă хыççăнхи Российăра çитёнё арăсынсенчен 7,5 мёлйун çын тара кёрёшсе ёçлекен рабочисем пулнă, урăхла каласан, çёршыври пётём çитёнё арçынсенчен çурри тара кёрёшсе ёçленё.

Российăра капитализăм аталанни прогрессивлă-историлё факт пулнă. Çак аталану „общественлă ёçленён производительлăй вăйёсем ўснине тата вăл пёрлешўлёленине" пёлтерё. (Ленин Т. III, стр. 466). Çак вăл клас кёрешўвё аталанма тата Российăри капитализăм общественни шăлти пётём хирёçёвёсене çивёчлетсе ăна кирлё услови пулнă.

Ленин вырăс капитализмённи прогрессивлă-историлё роль ăнăшăнине пёрлех, капитализăмăн пётём тарăн хирёçёвёсене уçса кăтартнă, вăл истори ёнченех илсен, ирттелес характёрлă пулнине кăтартнă: çак общественлă çирёптёсе антарасси, ун вырăнне—сыхăна çын експлуатацилессине пётерие çёнё общественлă тăвасси пурпёрех пулнă.

* * *

Ленин çырнă „Развитие капитализма в России" кёнекене пёрёк пирён парти аталанăвёнче уйрăмăнах революцулиё вырăн йышăнса тăнă. Çак кёнеке марксисăм тăшманёсене—народниксене илемлё ёнченех çёмёрçе тăкассине вёçлесе çитернё.

Çак кёнекене Ленина хирёç пыракансем критикăлăн ытла та çийелтен, йăшăх пулнă. Ленин хăйён „Некритическая критика" тесе çакăн пек критикăсенчен пёрне—П. Скворцова хирёç çырнă статйара—ăвтăртан тăвăлласа кулаç, унăн критики вырăнсăр пулнине ўçса кăтартаç. 1905—1907 ç.ç.сенчи революцци Ленин анализлё пётёмпех тёрёс пулнине çирёплетрё. Ленин Маркс вёрентёвне тепёр хут ура çине тăратнă çеç мар, вăл тата çак вёрентёве малала йăнă, капитализăм чухнехи шăлти рывăк аталанăвё çинчен марксисла теори туса хатёрленё.

Ленин „Развитие капитализма в России" кёнекене хăй те пысăк вырăна хунă. 1905 çулти революцци хыççăн çак кёнекене тепёр хут кăларнă чухне Ленин умсăмах çырнă (1907 çулти ийлў). Ленин çак умсăмăха: „Развитие капитализма в России" кёнекере общественлă-хуçалăхлă строй çинчен тунă анализа революцци вăхăтёнче пётём классен политикăлă уçă выступленийёсем çирёплетнине кăтартат.

М. Вершик.

ИСПАНИНЕ ПУЛĂШМА

Испани республикине пётём тĕнчипе пулăшу парассине килĕштерсе пырас тĕлĕшпе ĕçлекен Национ Комитет республикăла Испанири хĕрăрăсемпе ачасем валăн продовольствисем тĕнчен пур кĕтесĕсенчен те илсе пырасси ӳссе пыни çинчен палăртать. Америкăри Хĕрлĕ Хĕрес 1939 çулти январтре Испание çăнăх чылай йăрать. Бомбейри (Инди) Испание пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет продовольствисем сутăн илсе Испание йăма 3.600 фунт стерлинг пухнă. Англире хăлăхи вăхăтра Испание пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен Инди комитетне туса хунă. Испани выставкинче Единбург хулинче (Англи) нкĕ кун хушшинче пин фунт стерлинг пухнă.

Çĕнĕ çул тĕлне республикăла Испанири ачасене пулăшма Америкăри Перлешӳлĕ Штатсенчен, Канадăран, Швейцерен, Аргентинăран тата ытти çĕршывсенчен те пысăк суммăсем çитмелле.

(ТАСС).

— o —

Петер Форстера вĕлерни

1938 çулти майăн 13-мĕшĕнче Германири концентрацилĕ лагерĕсенче тарса тухса, Чехословакире Петер Форстер пытанса пурăннă. Ăна Германи влаçĕсем политикăла ĕçшĕн хупса тăвнă пулнă. Чехословаки правительстви Петер Форстера декабёрĕн 19-мĕшĕнче тытса Германи влаçĕсен аллине панă, вара ăна Веймар хулинчи тĕрмене хупса лартнă. Декабёрĕн 21-мĕшĕнче Петер Форстер фашиссен сучĕ умне тăнă. Хăсатсем пĕлтернĕ тăрăх, Петер Форстера суд вĕлермелле притăвар йышăннă, ăна вара çав кунах вĕлернĕ.

Концентрацилĕ лагерĕсенче Форстера пĕрле тарса тухнă Емиль Бергицкине çавăн чухнех Германи территорийĕнче тытса вĕлернĕ пулнă.

(ТАСС).

— o —

Германи Чехословаки пичетне хăй аллине йăрса илет

Чехословакине Германи хушшинче „куăтурăла килĕшӳ" тăвасси çинчен калаçусем пуласа пĕтнĕ.

Çак килĕшӳ тăрăх, нкĕ çĕршыв хăсачĕсемпе радиосем йĕнчен пĕр-пĕрин çине тапăнни пулмала мар, çавăн пекех Чехословаки территорине Йевропăра тĕрлĕрен çĕршывсенче кăларакан фашисăма хирĕçле нимĕç хăсачĕсене сарма чармала. Куçăр пуçне тата Чехословакине Меллин хулинчи радиостанци Германи аллине пама килĕшнĕ. Çак станци урăл малашне Чехословакире пурăнакан нимĕçсем валăн тăтăшах Германи передачисене трансляци тума пуçласçĕ.

(ТАСС).

— o —

Полъшă правитĕлстви Чехословакине панă протест

Декабёрĕн 23-мĕшĕнче Полъшăн Чехословаккири посланникĕ Папе йут çĕршыв ĕçĕсен министрне Хвалковскине нота панă. Полъшăна хирĕçле агитаци тунине хирĕç. Полъшă оккупациленĕ районсен чиккинче тĕрлĕрен инцидентсем провокацилесе тунине хирĕç протест лет Полъшă правительстви.

Пурте пĕлеççĕ, хăлăхи вăхăтра Германи фашисĕсем Полъшăна хирĕç вăйăл пропаганда сарса пырасçĕ. Полъшăна Чехословаки чиккинче провокацилĕ майсемпе инцидентсем тăвассĕ.

(ТАСС).

— o —

Монголи халăхĕ Йапони агрессăрне хирĕç кĕрешни

Китай хăсачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, шалти Монголире пурăнакан халăх ялта хĕçпăхать тытса Йапони агрессăрĕсене хирĕç кĕрешме çĕкленет. Шалти Монголире йăтăрласа „Шалти Монголи халăхне мобилизацилес тĕлĕпше ĕçлекен комитет" тунă. Çак комитет Йапони хирĕçле пĕтĕм ĕçе организацилет.

Монголсем Китай халăхĕпе пĕрле Йапони интервенчĕсене хирĕç партизансен кĕрешĕвне активлăн хутшăнаççĕ. Суйăуаң провинцин çурçĕр пайĕнчи Улан—Хуа районĕ пĕтĕмпех монгол партизанĕсен аллинче. Суйăуаң провинцин хĕвеланăç пайĕнче те монгол партизанĕсем активлăн ĕçлеççĕ.

(ТАСС).

Германипе Америкă хушшинчи хутшăнусем çивĕчленсе пыни

Декабёрĕн 18-мĕшĕнче Америкăри Перлешӳлĕ Штатсен шалти ĕçсен министрĕ Икес сăмах тухса калать: хăй сăмахĕнче вăл Германире ĕçевийсене хирĕç погромсем тунине хыттă питлеçĕ, çавăн пекех тата Линдберг полковникпа Форда, вĕсем Германи правительствинчен отличи знакĕсем илнĕшĕн, куласа питленĕ. Хăй сăмахĕнче Икес, фашиссем Германипе кайала, çын çурма-выльăх пек пулнă тапхăр патне тавăрчĕç, тенĕ. „Хайăр та тискер диктатăр аллинчен, — тенĕ Икес, — пиншер çынсене пĕр айăнспăр çараттакан, асланпаттаракан алăран мĕнле американецĕ отличи знакĕсем ниме пултарнĕ. Мăшăкласа кулаç панă отличи знакне американецсем мĕнле йăтса çӳреме пултарччăр".

Германи ĕçĕсен Вашингтонри поверенныйĕ Икес сăмахне хирĕç протест тунă, Америкăри Перлешӳлĕ Штатсем йĕнчен официаллă йĕркепех кăçару ыйтма требованипе тăратнă. Америкăри Перлешӳлĕ Штатсен государствă секретарĕн замещительĕ Германи поверенныйне: Америкăри Перлешӳлĕ Штатсем вăл протеста йышăнмаççĕ, мĕншĕн тесен, Икес тухса калани вăл — Америкăри Перлешӳлĕ Штатсенчи халăхăн нумайрахăн пайĕн туйăмĕсене палăртса калани пулать, тесе ответлĕрĕ.

Америкăри Перлешӳлĕ Штатсен правительстви Германи тĕлĕшпе татăкăла позици çине тăнине Америкăри хăсатсем ырлаççĕ. Хăсат-журналсем шухăшĕ тăрăх, Америкăри Перлешӳлĕ Штатсемпе Германи хушшинчи дипломатиллĕ хутшăнусем татăласси сывăх вăхăтрах пулма пултараç.

(ТАСС).

— o —

Итали хăсачĕсем çаплах Франципе йăнаса çыраççĕ

Итали хăсачĕсем çаплах Франци çĕрĕсене туртса илесси çинчен çыраççĕ. Правительствăпа хăсачĕ „Джорнале д'Италия" çĕнĕрен: Италипе Франци хушшинче халиччен тунă килĕшӳсем „тĕрĕс мар", Франципе Итали ыттинне парас пулать, тесе çыраç. Хăсат, Франци министрĕпе Бонне: Франци хăйĕн пĕр вершук çĕрне те парас çук тесе калани пирки темĕн тĕрлĕ тăрăхласа йăкăтает. „Çак ыйту малашне мĕнле пулса тухассине пурăнсан курăпăр", тесе çыраç вăл хăсат.

★

Михайленко тăванĕсен танк екипажĕ

Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусем пынă куçенче, Хĕвелтухăç Казахстан облаçĕнчи „Чалобай" совхозĕнчи тулламар вăтам шкула директорĕпе А. Н. Михайленко йăлташ аслă шывлĕнчен Александртан —героллă çапăçусен участникĕнчен çыру илнĕ. Çав вăхăтра унăн иккĕмĕш шывлĕ Григорий призыва кĕме хатĕрленнĕ.

Александрăн ашшĕне амăшĕ Оборонă Халăх Коммиссарĕ Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилăн йăлташ патне çыру йăнă. Вăл çырура вĕсен кĕçĕн шывлĕсене Иванпа Петра сруккенех Хĕрлĕ Çар ретне илме тата вĕсен шывлĕсенчен танк екипажĕ тума ыйтнă пулнă.

Оборонă Халăх Комиссариачĕ вĕсем ыйтнине пурăçса кĕртсе Михайленко тăванĕсене Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне илнĕ.

Çак куçенчех „Чалобай" совхозĕнчи рабочисемпе служăщисем Иванпа Петра Перремĕш Уйрăм Хĕрлĕлăлавлă Çăран танк чăсне ăшшăн ăсатса йăнă, вăл чăсе Александр тата Григорий Михайленкосем те пырасçĕ.

(ТАСС).

— o —

Винокурăв йулташ пионерсемпе комсомолĕçсем патĕнче

Совет Союзĕн Геройĕ аслă лейтенант В. П. Винокурăв йăлташ декабёрĕн 24-мĕшĕнче, Шупашкартипе пионерсен çуртĕнче çулхи пионерсемпе тата вĕренекенсемпе тĕл пулса калаçрĕ. Винокурăв йăлташ ачасене Хасан кӳлли районĕнчи паттăр çапăçусем çинчен, пирĕн Хĕрлĕ Çарпа унăн бойăнĕсем çинчен тĕпĕнчен каласа панă.

Пионерсем хăйсен сăмахĕнче Винокурăв йăлташа саламларĕç, вĕсем-хĕллехи каникула-лайăх кӳртерме, шкулта отличнă вĕренме пулчĕç.

Ĕнер Строителĕсен клубĕнче В. П. Винокурăв йăлташ хулари комсомол активĕпе тĕл пулса калаçрĕ.

Фашисăм сăн-сăпачĕ.
В. Барков ӳкерчĕкĕ (Бюро-канише ТАСС).

Халăх переписĕ пуçланиччен 22 кун йулчĕ

Суйлав кампанинчи активиссем переписе хатĕрленес ĕçре

Шăхасан районĕнче Пĕтĕм Союзри халăх переписине иртерĕ чухне ĕçлекен кадресне курссене тытăнать. Инструктăр-контролёрсем, счетчиксем, переписе уйрăмĕсен заведуйушшисем хушшинче Верховнăй Советсен суйлав кампанийĕсем вăхăтĕнче суйлав комиссри председателĕсем, секретарĕсем, членĕсем тата агитаторсем пулса ĕçленисем нумай.

Нумай колхозчен ăнлантару ĕçне тимлĕн туса пыраççĕ. Йулашки вăхăтра ку ĕç татах та вăйланать. Анчах та массăлă ăнлантарулă ĕç пур ăвалченче те йĕркелĕ пымаст-ха. Туçи Çармăсри колхозра переписе çинчен ăнлантарма тытăнман. Колхоз председателĕ П. И. Егоров йăлташ ăнлантару ĕçе ĕçе хутшăнмасăр тăрать. Вăл счетчик пулма уйăрнă И. П. Петрова инструктивлă канашлăва кайма лаша паман.

Переписе ăнăçлăн иртересси çак ĕçре ĕçлеме уйăрнă çынсенчен çеç килмест. Вăл пĕтĕм халăх ĕçĕ. Партине комсомол. совет организацисен вăл ĕçе хĕрлĕн хутшăнмала, переписе кадресене кулленхи ĕçре пулăшса пымала.

Г. Григорьёв.

Ăнлантару ĕçĕнче йертсе пымала

ССР Союзĕнчи кашни гражданинăн Пĕтĕм Союзри халăх переписине кăтартулă иртереме пулăшмала. Переписçе кĕмесĕр пĕр киле, тĕп çын та йулмала мар. Çакна май ĕнтĕ ăнлантарулă ĕçе вăйлатса пымала. Кашни ĕççынни переписе мĕшĕнĕ иртеринне тата унăн задачисене пĕлсе тăтăр. Партине комсомол организацисен массăлă-ăнлантарулă ĕçе йертсе пымала.

Тăвай районĕнчи хăшпĕр колхозчи пуçламĕш парторганизацисем халăх переписине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çăлпуç колхозĕнчи парторга З. Тимофейев йăлташа ыйтса пăхар. Коммунисем пухăвĕнче переписе хатĕрленес ыйтăна пĕр хут та сӳтсе-явмăн. Комсомол организацийĕ те ку ĕненĕ нимĕн те тумаст. Çавна пула ĕнтĕ йăлти халăх пулас переписе çинчен пĕлмест.

А. Пикишкин.
В. Ийĕин.

Учителсем пулас переписе çинчен ăнлантараççĕ

Шетмĕçуçĕнче (Ишлей р.) колхозниксемпе йединоличниксене пулас переписе çинчен тĕпăлĕн ăнлантарса парассишĕн агитаци участкисем туни. Учителсем 10—15 киçĕри халăха пĕр çĕре пухса халăх переписине мĕшĕнĕ иртерине тата унăн задачисем çинчен ăнлантарса парассĕ.

Халĕ колхозра çитеннисĕне вĕрентес тĕлĕшпе хĕрлĕн ĕçлеççĕ. Учителсем хутăл пĕрентьĕ чухне халăх переписĕ çинчен те калаçа парассĕ.

Колхозри комсомолĕсемпе шкулта вĕренекенсем те массăлă-ăнлантарулă ĕçе хутшăнчĕç. Вĕсем те килĕрен çуресе ăнлантарса парассĕ. Турханти «Çĕнĕ Хунав» колхозри комсомол организацин вечĕр иртерме хатĕрленет.

А. Смирнов.

Ăмăртăва хутшăннă фермăсенче

Кăçалхи çеçтабĕр уйăхĕнче Йĕпреçре выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Районри канашлура пулинсем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ирăкан Пĕтĕм Союзри социалисăмла ăмăртăна хутшăнма пуçтăç. Унтанпа ĕнтĕ вăхăт виçе уйăх патне çитет.

Районри колхозсенче илнĕ обязательствăсене мĕнле пурăçа кĕртсе пырасçĕ-ха? Колхозсенче сысна фермисем—13, сĕт-су фермисем 45 шутланса тăрасçĕ. Çак фермăсенчен хăшпĕрисем выльăхсене хĕл кăсарма тĕплĕн хатĕрленеймĕрĕç. Сыснасен 9 ферминче, ĕнесен 33 ферминче хĕл кунĕсене лайăх хатĕрленнине кĕтсе илчĕç.

Малта пыракан колхозсем Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне тултарас тата выльăхсен продуктивлăхне ӳстерес ĕнĕпе пысăк çитĕнӳсем турĕç. Акă, „Хĕрлĕ партизан" колхозри сысна ферми мухтавла вырăнта тăрать. Ку фермă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне ноябёрĕн 1-мĕшĕнче 112 процент, государствăна аш-какай тăпратмали плана октябёрĕн 1-мĕшне тултарнă. 28 сысна аминчен 392 çăвăр, йе кашни амаран 14 çăвăр илнĕ.

Сысна ферминче чаплă стахановецсем ĕçлеççĕ. Акă, А. Осипăн колхозник улшăнмасăр 5 çул хушши фермăра ĕçлет. Вăл 15 сысна ами пăхать. Ăмăртура Осипăн мăлти рете тухма пултарччĕ.

„Чувашия" колхозри сысна ферми те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне 49 процент тултарчĕ. Государствăна аш-какай парса татнă. Выльăхсене хĕл кăсарма тĕплĕн хатĕрленнĕ. Фермăри стахановкă И. Егоров 7 сысна аминчен 92 çăвăр илнĕ. 192-мĕш номĕрлĕ сысна ами 1938 çул хушшинче нкĕ хуттăн çăвăрласа 20 çăвăр, 70-мĕш номĕрлĕ сысна ами 21 çăвăр панă.

Чăрăшкассинчи „10 лет Октября" колхозри В. Краснов колхозник районра хăйĕн ĕçĕпе чапа тухрĕ. Вăл фермăра 1935 çултанпа ĕçлет. Вăл пăхакан 15 сысна аминчен — кашниченех 13 çăвăр илнĕ. Краснов кăçал пĕр пĕччен 440 пăт тырă ĕçлесе илнĕ.

„Нива" колхозра Сергейёв 9 çул хушши коньюхра ĕçлет. Вăл пĕр пĕччен 15 тыха пăхса çитĕнтернĕ.

Районра 56 коньюх, дойăркăсем 25 çын, фермăра ĕçлекенсем 20 çын, фермă пуçлăхĕсем 11 çын тăрнă. 28 сысна аминчен 392 çăвăр, йе кашни амаран 14 çăвăр илнĕ.

Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Д. Михайлăв.

Мăнков колхозникăн тӳрлĕхĕ

МĂН-СĔНТĔР. (Телефонпа). Декабёрĕн 21-мĕшĕнче çĕрле почтă илсе çӳрекенсем Чикме хулине кайма Мăн-Сĕнтĕрти сыхăну кантурĕнчен нкĕ лавпа посылкăсем тиесе тухнă пулнă. Мăн-Сĕнтĕртен тухса виçĕ километр кайсан, вĕсен пĕр посылкă ӳксе йулнă. Вăл посылкăна Мари республикинчи Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Павел Мăнков йулташ тупнă. Мăнков йулташ вăл посылкăна çийĕнчех Мăн-Сĕнтĕрти сыхăну кантурне лесçе панă.

Мăнков колхозникăн тӳрлĕхĕ çинчен ССРС Сыхăну Халăх Комиссариатне çырса пĕлтернĕ.

Г. Поҫаков.

Красноармейĕçсен шашкă-шахмăт турнирĕ

Дон-çи Ростов хулинчи Н-ски часри красноармейĕсем шашкă-шахмăт турнирĕ туса иртерчĕç. Турнира чăваш красноармейĕсем те нумайĕшĕ хутшăнчĕç. Турнирта шашкăпа Вăрнар районĕнчен килнĕ Сергейёв пĕрремĕш вырăна тухрĕ, Тăвай районĕнчен килнĕ Андрейёв—иккĕмĕш вырăна, Вăрмар районĕнчен килнĕ Степанăв—виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Шахмăтпа Шăхасан районĕнчен килнĕ Доброхотăв мала тухрĕ.

Н. Павлăв

— o —

Шахмăт турнирĕ

Чăвашсен йăлăхçулăх институтĕнче шахмăт турнирĕ пулса иртнĕ. Турнира шахмăтла лайăх выляма пĕлекен 18 студент хутшăнă.

Турнирта пĕрремĕш вырăна А. Родионăв йулташ тухрĕ.

А. Иванов.

Тырă сутăн илме

ЙĔПРЕÇ. Чăваш Тимеш районĕ колхозчисенчен 21 тонна тырă сутăн илме договăр тунă.

Д. М.

★

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунă" хаçатăн декабёрĕн 24-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче пичетленнĕ „Чăваш АССР Республикинчи йăлти вырăнсенче 1939 çулта пурăннăмăн çуртĕр тата культурăпа йăла строительстви валăн укçа-тенкĕ пухассине туса иртересси çинчен" Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлении 13-мĕш пунктĕнче йăнăш кайнă вырăн пур. Вăл пункта çапла вуламала:

„Ĕççынни йединоличниксен хуçалăхĕсем, вĕсен хуçалăхĕнче Совет Союзĕн Геройĕсем, ССР Союзĕн орденĕсемпе йе революцилĕ хисеплĕ хĕçпăхалăсемпе наградăлана çынсем тата ĕç геройĕсем, çавăн пекех инвалидăсăн 1-мĕшпе 2-мĕш группине кĕртнĕ ĕçпе вĕрçа инваличĕсем пур пулсан, вăл хуçалăхри çемйен ĕçлеме пултаракан ытти членĕсем çук пулсан, куçтăсбор укçинчен 20 процент чухлĕ скидкăна усă кураççĕ".

Çав номĕртех, 1-мĕш страницăра, „Колхозсенче 1938 çулти тупăшсене валеçесси çинчен" ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ йышăннă постановление, иккĕмĕш колонкăри 3-мĕш абзацăн малтанхи предложение вырăсларан тĕрĕс куçарман. „Чылай колхозсенче колхоз правленийĕсем пĕрлехи пуху çирĕплетмен сметăсем тăрăх расхут тăваççĕ..." тесе вырăнне: „Чылай колхозсенче колхоз правленийĕсем пĕрлехи пуху çирĕплетнĕ сметăсем тăрăх расхут тăваççĕ..." тесе тӳрлетсе вуламала.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Шупашкарти йăвăç савăтне

КИРЛĔ:

мебĕл тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен маçтăр, стоҫаҫрни ĕçре икĕ бригадир, плановик, бухгалтĕр, кассир, снабженни тата сбыт начальникĕ.

ХВАТЕР ПАРАÇÇĔ.

1—76 номĕрлĕ телефон тăрăх йĕ ĕç вăхăтĕнче савăт кантурне пырса тĕпĕлĕн мĕтĕс пĕлме пулать.

Шупашкарти йăвăç савăтне

ЛАВСЕМ КИРЛĔ

Мари республикинчи Лапшински ялăран (йĕнĕç ганăтĕнчен 25 километрта)

10 пин кубла метр вутă турттармала

тата йĕтĕрне вăрман хуçалăхĕн Пошкар участокинчен 2 пин кубла метр йăмăк болванăсем турттармала (йĕнĕç савăтĕнчен 65 километрта). Хăйĕсем—килĕшӳ тăрăх. Йотăвăрсене йăнăç савăтĕнче тăваççĕ Йăнăç савăчĕ.

8-2

Шупашкар хула совечĕн пурăнакăлли суртĕвĕр управленийĕ РСФСР членĕсем пулинисене пурне те, пай укçине кайăка илменнисене,

пай укçине 1939 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен ниме шăтăт.

1939 çулти январĕн 1-мĕшĕ хыççăн ку ыйтупа претенсисем йышăнмаççĕ.

Полукирери вăрман савăтне

К И Р Л Ĕ:

бухгалтĕр заместитĕлĕ, счетовод-картотетчик.

Ĕçуççи килĕшӳ тăрăх. Подйомнăй КЗОТ тăрăх.

АДРЕС: Станция Кира, Казанской ж. д., Полукировский лесозавод.

ПОДПИСЧИКСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Çак журналсене çырăнса илес срока 1939 çулти йăнварĕн 10-мĕшĕн чăсна:

Вестник древней истории—хакĕ (пересылотăр) . . . . 40 тенкĕ
Исторические записки—хакĕ . . . . 45 „
Мировое хозяйство и мировая политика—хакĕ . . . . 48 „
Проблемы экономики—хакĕ 24 „
Советская книга—хакĕ . . . 42 „
Красный архив—хакĕ . . . 24 „
Советский музей—хакĕ . . 30 „
Советская наука—хакĕ . . . 36 „
За устойчивый урожай на юго-востоке—хакĕ . . . . . 9 „

Çак журналсене КОГИЗăн пур магазинĕсенче те çырăнса илĕр. Заказсене çак адресне йăтăр: г. Чебоксары, ул. М. Горького, 5, КОГИЗ.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикинчи уйăрмĕ.

ХАÇАТ-ЖУРНАЛСЕНЕ

1939 ÇУЛШĂН ÇЫРАНСА ИЛĔР

Республикăра тухса тăракан хаçатсемпе журналсене мĕн чухлĕ кирлĕ таран çырăнма пулать.

Хаçатсемпе журналсен йăнăçĕсем	Мĕнле чĕлхепе тухаç	Çырăнса илмели хакĕ			
		1 уйăха	3 уйăха	6 уйăха	Çулташăка
Хаçатсем:					
„Красная Чувашия"	Вырăсла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Чăваш Коммунĕ"	Чăвашла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Çамрăк большевик"	„	60	1—80	3—60	7—20
„Пионер сасси"	Чăвашла тата вырăсла	25	75	1—50	3—00
„Стахановла хăвăртăхшăн"	Чăвашла тата вырăсла	50	1—50	3—00	6—00
Журналсем:					
„Ленин çулĕпе"	Чăвашла	1—00	3—00	6—00	12—00
„Ĕçĕрăрăмĕ"	„	50	1—50	3—00	6—00
„Сунтал"	„	1—00	3—00	6—00	12—00
„Капкăн"	„	40	1—20	2—40	4—80
„Хатĕр пул"	„	30	90	1—80	3—60

ПОДПИСКĂНА союзпичет, почтă, почтальйонсем, хаçат çырăнассине организацилекенсем, предприйатисенчи, учреждениесенчи, МТС-сенчи, совхозсенчи тата колхозсенчи пичет саракан ответлă çынсем ирĕççĕ.

Шупашкарта хаçатсемпе журналсене кашни уйăхăн 29-мĕш числиччен, районсенче 27-мĕш числаччен çырăнма пулать.

ПОДПИСКĂНА ÇАК АДРЕСПА ЙĂМАЛА: Город Чебоксары, ЧАССР, Дом связи, подписная контора „Союзпечать".

Сыхăну управленийĕ „Союзпечать".

Уполномоченный Чувашглавлита № 591.

Гор. Чебоксары, типографи № 1 Министерство ЧАССР. заказ № 881 Ф. 6. 58×84 п. л.